**Кĕркунне**

Ки-как! ки-как! кайăксем,
Ăçта эсир васкатăр?
Илем кӳрен шур хурсем,
Мĕн-ма кунтан каятăр?!

Ки-как! ки-как! кăшкăрса
Шывран шыва вĕçетĕр.
Çунатăра сулласа: —
Килес çулччен! — теетĕр.

Текех инçе уй-хирте
Çынсен сасси янрамасть.
Çилсем епле вĕрсен те
Ыраш пусси хумханмасть.
Кĕтес пулать хурсене
Тепре çăва тухиччен,
Сăртсемпеле çарансем
Ешернине куриччен.

*Ахун, В. Кĕркунне : [сăвă] / А.Юрату // Чăваш литературин антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 224.*